МАРТ, 21: ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПУКАНЕ ТЕАТРĔН КУНĔ

# «Осипов ресторана илсе кайрĕ»

**«Эпир, вăрçă ачисем, пĕчĕкренех ĕçе кӳлĕннĕ. Аслă аппасем колхозра ĕçлетчĕç. Вĕсем те 8-9 çулсенче çеç пулнă. Мана вара, 6 çултискере, анне ĕне пăхма шанчĕ. Пĕррехинче урана кĕленче катăкĕ тăрăнчĕ. Унăн йĕрĕ паянхи кун та юлнă. Чи кăсăкки вара çакăнта: хайхискер шăп çулталăкран хайпе хăй тухрĕ», – ачалăхне аса илчĕ Зоя Сергеевна Никонорова.**

## Ачалăх кунĕсем

6-7 çулсенчи ачасем колхоз хирне çум курăкран тасатнине, кок-сагыза шăварма çӳренине, шыва вара ял хыçĕнчи пĕвеpен пĕр çухрăмран йăтнине куç умне кăларчĕ. «Пĕчĕккĕллех алла çурла тытни те асăмрах, – терĕ вăл. – Тĕрĕссипе, çурлине тытма та пĕлмен. Ахальтен мар кача пӳрнене касса суранлатрăм. Юн юхнине курса анне ăна тăпрапа сĕрчĕ те çĕтĕк татăкĕпе çыхрĕ. Çакнашкал сипленĕ пире ун чухне. Нăйкăшса ларма вăхăт пулман, малалла ĕçлемелле».

Пĕчĕк Зойăна чир-чĕр нушалантарнăран пĕрремĕш класра çур çул çеç вĕренме тивнĕ. Лайăх вĕреннĕрен ăна иккĕмĕш класа пĕрех куçарнă. Паллах, хăй те тăрăшнă. «Вальăпа Рая аппасем урок тунă вăхăтра сĕтел айне кĕрсе ларатăм. Саспа вулатчĕç, вĕсене итлеттĕм. И.Я.Яковлев хатĕрленĕ «Букварь» ялта никамăн та çукчĕ, пирĕн çеç. Атте илсе панăччĕ ăна, – малалла тăсăлчĕ сăмах çиппи. – 8-10-мĕш классенче вĕреннĕшĕн çулталăкра 300 тенкĕ укçа тӳлемеллеччĕ. Пĕррехинче, шкултан тавраннă май, йĕрсе пыратăп. Мĕншĕн тесен малалла вĕренме укçа çук. Ман хыçра – алгебра, геометри вĕрентекенĕ Ева Федотовна. «Мĕншĕн йĕретĕн?» – ыйтрĕ хайхискер мана хăваласа çитнĕ май. Эпĕ ăна вĕренме пăрахассине, укçа çуккине каларăм. «Ан пăрах. Мĕн чухлĕ кирлĕ? Хам паратăп», – терĕ вăл. Укçине те пачĕ, те памарĕ – халĕ астумастăп. Эпĕ вĕренме пăрахмарăм, Ассакасси шкулĕ хыççăн Калининăри вăтам шкула ялтан пĕччен çӳреме пуçларăм. Вăтам пĕлӳ илнĕ май Чăваш патшалăх педагогика институтне физикăпа математика уйрăмне вĕренме кĕмешкĕн аттепе урапапа çула тухрăмăр. Вăл Шупашкара килме колхозран ятарласа лаша ыйтнăччĕ».

Тăрăшуллă хĕр хăйĕн ĕмĕтне пурнăçланă, аслă шкулта çулталăк çурă пĕлӳ илнĕ. Вĕреннĕшĕн кунта та укçа тӳлемелле пулнăран унăн ĕмĕчĕ татăлнă.

## Аса илӳ аварĕнче

Зоя Сергеевна 14 çул Чăваш патшалăх пукане театрĕнче ĕçленĕ. Хăйĕн кунçулне артист ĕçĕпе епле çыхăнтарнă-ха вăл? Кун пирки вара çапларах аса илет хĕрарăм: «Аппа патĕнче «засыпушкăра» пурăнаттăм. Пĕррехинче Илья Антоновин Антонов кӳршĕ вĕсене пукане театрĕнче хĕрача кирлине пĕлтерчĕ. Аптăраса ӳкрĕм: «Эпĕ пултараймастăп», – тетĕп. «Вĕрентетпĕр. Эпĕ сана пĕр артисткăпа паллаштаратăп», – терĕ. Килĕшрĕм. Кайрăмăр ун патне. Паллашрăмăр. Ку Елизавета Орлова пулчĕ. Пĕрре курсах килĕштертĕм ăна. Хăйĕн ĕçне парăннă çынччĕ вăл. Хайхи пуçларăмăр ĕçлеме: пьеса вуласа тухрăмăр. Тепĕр темиçе кунран каллех Елизавета Егоровна килĕнче, тĕп хулари Пионер урамĕнчи пĕрремĕш çуртра, пуçтарăнтăмăр. Коллектив пысăк мар, пилĕк çын: Илья Антонов, Семен Григорьев, Степан Михайлов, Елизавета Орлова тата эпĕ. Степан Михайлович – купăсçă. Ăна та сăнар пачĕç. «Иван – хресчен ывăлĕ» /Б.Сударушкин/ пьесăна лартмашкăн хатĕрленме пуçларăмăр. Режиссерĕ – Елизавета Орлова. Унсăр пуçне вăл Иван сăнарне илчĕ. Манăн Дуня, Феона, Асамçă карчăк сăнарĕсене калăпламалла. Каярахпа Автан та, Йытă та пулма тӳр килчĕ. Ку пьеса пысăккисем валли пулчĕ. Пĕчĕккисем валли «Вису хĕрача», «Шăнтăр, шăнтăр кашкăр хӳри» спектакльсене хатĕрлесе çитертĕмĕр. Паллах, пуканесене те хамăрах çĕленĕ. Семен Григорьевич пукане пуçне, кӳлепине тăватчĕ, Илья Антонович çăпата хуçатчĕ. Эпир Елизавета Орловăпа кĕпесем çĕлеттĕмĕр, тумлантараттăмăр. Пусма таврашне килтен илсе пыраттăмăр. Манăн аслă туссем Чăваш пукане театрне уçакан Сергей Мерзляков режиссер, драматург, художник-скульптор вĕренекенĕсем пулнă. Хупăннă театра çĕнĕрен кун çути кăтартнă вĕсем. Çапла майпа, Елизавета Орлова тăрăшнипе, 1955 çулта пукане театрне çĕнĕрен йĕркеленĕ».

Сентябрь уйăхĕнче артистсем Муркаш районĕнчи Москакассине гастроле тухса кайнă. Вĕсене зал тулли халăх кĕтсе илнĕ. «7-8 çухрăма чылай çул çуран çӳрерĕмĕр, – аса илӳ аварне путать Зоя Сергеевна. Хĕллехи шартлама кунсенче лаша паратчĕç колхозран. Лав çине декораци хураттăмăр, ларма вырăн юлмастчĕ. Хамăр юнашар утаттăмăр. Тепĕр чухне юрлаттăмăр. Купăсçă сассăр тăрса юласран асăрхаттаратчĕ. Сивĕ вăхăтра вара утиялсем пĕркенсе утаттăмăр. Кам хаклатăр халĕ çакна? Ĕненекен çын та çук пулĕ».

Пукане театрĕн артисчĕсем пĕр çемьери пек туслă пурăннине палăртать Зоя Никонорова. «Семен Григорьевича ку-



Пукане театрĕн артисчĕсем. Сылтăмран пĕрремĕшĕ – Зоя Никонорова.

лăш ăсти пулнăран халăх юрататчĕ. Елизавета Егоровна вара маншăн анне пекех хаклăччĕ. Вăл мана ширма хыçĕнче утма, пуçласа алла пукане тытма вĕрентрĕ. Унăн сăмахĕсем халĕ те хăхара янăраççĕ: «Эсĕ кулнă чухне пуçна кăштах каялла ывăтсан çав хусканăвахăтланăва пукане çине куçар. Пуканене яланах тӳрĕ тыт, вăл вут пуленки мар, эсĕ чун панă çын. Ача пулсан – ачалла чун пар, карчăк тăк – ват çын пек, чĕр чун пулсан – чĕр чун евĕр. Кун пек чухне сана куракан ĕненĕ, ăнланĕ, ышăнĕ». Çак сăмахсене вăл репетицисенче çеç мар, спектакль вăхăтĕнче те аса илтерсех тăратчĕ. Усал сунса мар, анне пек вĕрентсе калатчĕ», – ырă самантсене аса илнĕ май куçĕ çиççе çуталчĕ артисткăн.

## Тĕрлĕ енлĕ пултарулăх

Пукане театрĕ Петр Осиповăн «Любовь до востребования» пьесине те сцена çине кăларнă. Ăна вырăслах лартнă. Кунта Зоя Никонорова Таня тата икĕ карчăк ролĕсене калăпланă. «Пукане кĕпине халĕ те астăватăп. Ăна хамах çĕленĕччĕ», – терĕ вăл хавхаланса. «Петр Осипов еплерех çынччĕ?» – кăсăкланатăп эпĕ. «Питĕ пултаруллăччĕ. Тухтăр пулса ĕçленĕ хушăрах пьесăсем те çырнă-çке вăл. Çитменнине, усă чунлă çынччĕ. Мăн кăмăллăхĕ пачах та çукчĕ. Çак спектакль хыççăн пире, артистсене, ресторана илсе кайрĕ, тутлă апат-çимĕçпе сăйларĕ. Кашни автор çапла тума пултарать-и? Çук паллах. Эпĕ тĕлĕнеттĕм унран», – пулчĕ хурав.

Артистсем республикăра çеç мар, унăн тулашĕнче те гастрольсенче пулнă. Пушкăртстанри пулăм вара асран тухмасть. Ун чухне вĕсем «Сарпике юрри» /Ефим Никитин/ спектакльпе çула тухнă. «Елизавета Орлова Сарпикен амăшĕн амăшне – Сахана – вылятчĕ. Юмах пынă май Саха – Пике те, хăрушă Тухатмăш та пулса тăратчĕ. Çак висĕ сăнара та Елизавета Егоровна чун кĕртетчĕ. Эпĕ Сарпикене вылянттăм. Спектакль пĕтсен хваттере таврăнтăмăр та кил хуçи хĕрарăмĕ мана: «Ай-уй, шалккă-çке сана», – тет. «Сана вара кĕртместĕп, ытла та усал çын эсĕ», – тет Елизавета Орловăна. Хăй чăнласах ăна хваттере кĕртмест. Эпир малтан ку шӳтлет пулĕ терĕмĕр, вăл чăнласах калать иккен. Кун пекки пĕрре çеç пулман. Артисткăн пултарулăхĕ çакăнта палăрнă та: куракана ĕнентерме пултарнă, тыткăна илнĕ. Çакна вара чăн-чăн артист çеç тума пултарать», – малалла тăсăлать калаçу.

Зоя Сергеевна радио çуртне 1956 çулта пырса кĕнĕ. Ун чухне театртах ĕçленĕ-ха вăл. «Висĕ хĕрача», «Шăнтăр, шăнтăр кашкăр хӳри» спектакльсене пленка çине çырса илес тĕллевпе актерсене ача-пăча кăларăмĕсен редакторĕ Валентина Элпи пуçтарнă. Çавăнтан пуçланнă унăн радиори пурнăçĕ. Литература кăларăмне ертсе пыракан Кусма Чулкас та пултаруллă артисткăна куçран вĕçертмен.

1967 çулта вара Зоя Никоноровăна Чăваш телекуравне ĕçлеме чĕнсе илнĕ. Çав вăхăтрах радиора та «Хатĕр пул», «Шăнкăрав» кăларăмсене ертсе пынă. Шкул ачисен юрри-ташшине çырса илсе телекуравра кăтартнă. Ачасен пултарулăхĕн фестивальне ирттерме тытăнни те питĕ пĕлтерĕшлĕ.

24 çула яхăн телекуравра малтан режиссер ассистенчĕ, унтан режиссер пулнă. Кунта та пукане театрĕнчен уйрăлайман вăл. Çамрăк куракан валли кăсăклă пьесăсем суйласа илнĕ, вĕсене лартма пукане театрĕн артисчĕсене явăçтарнă. Хăш-пĕр роле хăй те вылянă. Темĕн те пĕр пĕлекен Пĕлейкин сăнарĕ хăех мĕне тăрать!

«Каçхи хăна» кăларăма та аса илмеллех. Раççей халăх артисчĕсемпе Татьяна Самойловăпа, Зинаида Кириенкăпа, РСФСР тава тивĕçлĕ артисткипе Лидия Макаровăпа тĕл пулнисем нихăçан та асран тухмаççĕ. СССР халăх артисчĕ Михаил Ульянов та, Андрей Капица ăсчах та хăй вăхăтĕнче Чăваш телекуравĕн хăнисем пулнă. Вĕсене Зоя Никонорова режиссер эфира кăларнă.

Вăл çавăн пекех тĕп хулари куç курманнисен Лев Толстой ячĕллĕ библиотекинче те ĕçленĕ. Чăваш çыравçисен хайлавĕсене /пурĕ 226 кĕнеке/ вуласа магнит пленка çине çырса илнĕ. Çак ĕçе Петĕр Хусанкайăн «Таня» поэминчен пуçланă. 2001 çулта Раççей конкурсĕнче «Чи лайăх диктор» номинацире çĕнтерсе дипломa тивĕçнĕ. Ăна типтерлĕн упрать артистка.

## «Çемье лавне пĕччен туртрăм»

Пĕр вăхăт вĕсем мăшăрĕпе Виталий Никоноровпа театрта пĕрле ĕçленĕ. Çемьере ывăлпа хĕр кун çути курнă. Шел те, вĕсем çитĕннине ашшĕ курайман, пурнăçран сарăмсăр уйрăлнă. Женьăпа Иннăна пĕччененех ӳстернĕ хĕрарăм. «Упăшка вилнĕ чухне ывăлăм вунăраччĕ, хĕрĕм вара – улттăра. Ачасене çитĕнтерме çăмăл пулмарĕ. Никамран пулăшу ыйтмасăр малаллах талпăнтăм. Астăватăп: атте пĕррехинче 500 тенкĕ панăччĕ. Колхозникăн мĕн укçи пултăр? Шăла çыртса, хама шанса çемье лавне малалла туртрăм, ачасене ура çине тăратрăм, вĕрентсе кăлартăм», – иртнĕ кунçулне аса илет Зоя Сергеевна. Çапла, Евгений Витальевич халĕ Мускаврa пурăнать, сценограф. Инна Витальевна вара И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе географи факультетĕнче ĕçлет.

Çулсем иртнĕçемĕн сывлăхĕ хавшаса пыни пăшăрхантарать ĕнерхи артисткăна. Çавна май вăл тухса çӳреймест. Унăн юлташĕ – хутпа ручка. Чун-чĕрери аса илӳсене, туйăмсене, пулăмсене шур хут çине куçарать. Тепĕр чухне чунра капланса килнĕ шухăшсем те çырăнаççĕ унта:

Ак ларатăп тĕмсĕлсе
Чӳречерен тинкерсе.
Чупса тухса шухăшпа
Шур юр тăрăх чупăттăм…

**Валентина ПЕТРОВА.**

## КĔСКЕН

**❒ Зоя Никонорова (Сергеева) Элĕк районĕнчи Мăн Карачура ялĕнче 1934 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнче çуралнă.**

**❒ Тăван ялĕнчи пуçламăш, Ассакассинчи çичĕ çул вĕренмелли, Калининăри вăтам шкулсенче пĕлӳ илнĕ.**

**❒ Каярахпа И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн чăваш чĕлхипе литературин уйрăмĕнче вĕреннĕ.**

**❒ Вăл Чăваш Республикин чи пысăк наградине – Хисеп грамотине, ССР Союзĕн Патшалăх телерадио комитечĕн Хисеп грамотине, «Телевиденипе радио отличникĕ» ята тивĕçнĕ.**